Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Хаçат çул тухать: Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮНЬ
25
ЭРНЕКУН
130(6367) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тырă вырмалли машинăсемпе инвентаре васкасах юсамалла

Хĕрӳллĕ ĕçси кунĕсем çывхарса килеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çуркунне тăрăшса ĕçленипе хӳхĕм çитĕнекен тырпула ăнаçлăн пухса кĕртме юсавлă машинăсем, çирĕп ĕçхатĕрĕсем кирлĕ.

Анчах тырпулсене вырса пуçтармалли машинăсемпе ĕçхатĕрĕсене юсас тата çĕнĕрен туса хатĕрлес ĕç республикăри колхозсенче питех те вăрахăн пырать.

Июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсенче жнейкăсемпе лобогрейкăсем юсамалли плана 39,4 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах çак районсем кая юлса пыраççĕ: Сĕнтĕрвăрри районĕ жнейкăсемпе лобогрейкăсем юсамалли плана 17,8 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ 21,9 процент, Красноармейски — 22,3 процент, Советски — 22,7 процент, Шăмăршă — 23,4 процент çеç пурнăçланă. Çавăн пекех Первомайски, Етĕрне, Калинино, Куславкка, Ишлей районĕсенче те ĕç çакăнтан малах кайман.

Тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленессипе пĕрлех колхозсен халĕ ытти пысăк ĕçсене те туса пымалла. Колхозсем ĕнтĕ утă çулма массăллăн тытăнаççĕ. Анчах республикăри нумай косилкăсене юсаса ĕçе яман. Вăрмар районĕнче 58 косилкăран 12-шне, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 39 косилкăран 14-шне çеç юсанă. Çакна пула утă çулас ĕç питех те кая юлма пултарать. Пĕр ĕçе вăхăтра вĕçлеменни тепĕр пысăкрах ĕçе каялла туртать.

Халĕ ĕнтĕ молотилкăсене юсас ĕçе те ырана хăварма çук. Фронт пирĕнтен вырнă пек тырра çийĕнчех çапса пырса, государствăна леççе пама ыйтать. Çавăнпа молотилкăсене те жнейкăсемпе пĕрлех юсамалла. Анчах çакна Первомайски районăн руководителĕсем ăнланса илмен-ха. Унта 78 молотилкăран паянхи куна пĕрине те юсаман. Сĕнтĕрвăрри районĕнче 108 молотилкăран 9-шне, Шăмăршă районĕнче 102 молотилкăран 10-шне çеç юсанă. Молотилкăсем юсас ĕç çавăн пекех Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски, Улатăр районĕсенче те япăх пырать.

Хăшпĕр колхоз председателĕсем халĕ тимĕрç çук тесе ӳпкелешеççĕ. Тимĕрçе хăйсем вĕрентсе хатĕрлемесен кам тупса патăр-ха? Тимĕрçĕсем колхозсене вăхăтлăха кăна мар, яланах кирлĕ. Çавăнпа та вĕсене хатĕрлесси çинчен колхоз руководителĕсен ĕнер те шухăшламалла пулнă, паян та ку тĕлĕшпе мĕн те пулин тумалла. Уйрăм колхозсем машинăсене юсасси пирки тимĕрçĕсем пур колхозсемпе договорсем тăваççĕ. Çак майпа ĕнтĕ ытти колхозсен те усă курмалла пулать.

Вăрçă пынă вăхăтра пирĕн промышленность, паллах, халăха сортлă тимĕр кирлĕ таран парса тăраймасть. Ку енĕпе те колхоз руководителĕсен такам çине шанса лармалла мар. Колхозпа колхозниксен хуçалăхĕсенче кивĕ тимĕрпе машина пайĕсем сахал мар тупма пулать.

Комсомольски районри „Пролетарий" колхозра Люберецки завод туса кăларнă жнейкăсен хаччисем валли вкладышсем çук, çав вăхăтрах вĕсем „Большевик" колхозра темĕн чухлех тата усăсăрах выртаççĕ. „Большевик" колхозăн хăйĕн—Первомайски завод кăларнă жнейкăсем, çавăнпа вĕсене вăл вкладышсем кирлĕ те мар. Çапла ĕнтĕ колхозсем тăрăх тĕплĕн шыраса пăхсан, кирлĕ япаласем тупма пулатех.

Машинăсем валли запаслă пайсем хатĕрлесе парас ĕçре колхозсене республикăри промышленность предприятийĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Анчах ку енĕпе предприятисем çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕ ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем хатĕрлессинчен тăтăшах пăрăнса юлма хăтланакан предприяти руководителĕсем пирки çирĕп мерăсем йышăнма кирлине кăтартса хăварчĕ. Заводсен партипе правительствăн кăтартăвĕсене пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртес пулать.

Çапла вара, колхозсем хăйсем те çине тăрса ĕçлесен, вĕсене промышленность предприятийĕсем те пулăшсан, эпир уборкăна кирлĕ ялхуçалăх машинисемпе ытти ĕç хатĕрĕсене вăхăтра юсаса çитерме пултаратпăр.

Хĕрӳ вăхăт çитсе пырать. Çине тăрсах ĕçлемелле, кашни кун мĕн те пулин туса хатĕрлемелле. Уборкăна хатĕрленнĕ чухне вăхăта усăсăр çухатни—тырпула çухатасси патне илсе пырать. Çавăн çинчен райком секретарĕсемпе райисполком председателĕсен, çĕрĕç органĕсен, колхоз руководителĕсен пĕр самантлăха та манмалла мар.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 22-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн подразделенисем 160 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçри артиллеристсем тăшман позицийĕсене сасартăк вăйлăн пенĕ. Снарядсем тӳрремĕнех пырса ӳкнипе боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн артиллери батарейипе миномет батарейине пĕтерсе тăкнă. Уйрăм участоксенче нимĕçсен вак подразделенийĕсем разведка тума хăтланнă, анчах та пирĕн подразделенисем вĕсене пăшалпа тата минометпа персе сапаласа янă.

* * *

Севск районĕнче пĕр чаçри артиллеристсем тăшман пехотине пĕр ротăна яхăн вĕлерсе тăкнă, пĕр дзота ишĕлтерсе антарнă, 2 лава пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

Пирĕн территори çине нимĕçсен „Фокке-Вульф — 190" йышши 2 юсавлă самолечĕ анса ларнă. Нимĕç летчикĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Мценскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре икĕ ене те артиллерирен персе тăнă. Пирĕннисем тăшманăн темиçе укреплениене ишĕлтерсе антарнă тата 80 гитлеровецран кая мар пĕтерсе тăкнă. Тăшман самолечĕсем пирĕн пĕр об"екта тапăнма хăтланнă, анчах та вĕсене унта пыма паман, сапаласа янă. 2 нимĕç бомбардировщикне персе ӳкернĕ.

* * *

Ĕнер Германи командованийĕ çапла пĕлтернĕ: „Июнĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен çамăл тинĕс-çар вăйĕсем Азов тинĕсĕ хĕрринчи Ейск хулипе портне печĕç", тенĕ. Ахаль пулсан ку пĕлтерӳ çинчен калаçмалли те пулмасчĕ. Анчах та вăл пĕлтерӳ акă мĕн тĕлĕшпе паллă пулса тăрать. Нимĕç командованийĕ чăнлăха пысăк ĕçре кăна мар, пĕчĕк ĕçре те жуликла хăтланса пытарса хăварма тăрăшать. Чăннипе ĕç çапла пулса иртнĕ: июнĕн 20-мĕшĕнче 7 нимĕç катерĕ Ейск патне çывăхарма хăтланнă. Анчах вĕсене пирĕн артиллерипе авиаци каялла хăваласа янă. Çавăн чухне тăшманăн хула патне çывăхарса пынă 7 катерĕнчен тăватăшне шыва путарнă, вара юлашки 3 катерĕ тĕтĕм хӳттипе тарса пытаннă. Унсăр пуçне тата çав операци вăхăтĕнче пулса иртнĕ сывлăшри çапăçура пĕр нимĕç самолетне тинĕсе персе ӳкернĕ. Пирĕн авиацин çухатусем пулман. Фактсем çакăн пек, анчах Германи командованийĕ вĕсем çинчен нимĕн те шарламасăр хăварнă.

* * *

Волхов фронтĕнче тăшман разведка тума хăтланнă. Пирĕн подразделенисем гитлеровецсене вăхăтра асăрханă. Вĕсем тăшмана пăшалпа тата пулеметпа персе пысăк çухатусем кӳнĕ те каялла ывăтса янă. Иккĕмĕш хут çаз участокра разведка тума 50 нимĕç салтакне яхăн тухнă. Ку ушкăна вара пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне яхăн пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем пенипе нимĕçсен 37 дзот, 16 землянка тата 9 наблюдательнăй пункт ишĕлнĕ, нимĕçсен 2 орудине, 3 пулеметне, миномет батарейине, çар грузĕ турттарса пыракан 13 автомашинипе лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕсем тăшман çулйĕрĕсене таттисыпписĕр пыра-пыра çапаççĕ. Киров ячĕпе тăракан отрядри партизансем июнĕн 3-мĕшĕнче нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, горючи тата сĕрмелли япаласем тиенĕ 15 цистерна пĕтнĕ. Июнĕн 5-мĕшĕнче Калинин ячĕпе тăракан отряд, минăсем хурса, нимĕçсен фронта çар турттарса пыракан поездне сирпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата 7 вагон пĕтнĕ. Щорс ячĕне тăракан отрядри партизансем июнĕн 9-мĕшĕнче тăшман эшелонне крушени тунă. Пĕр паровоз пĕтнĕ, 11 вагон ванса кайнă тата 19 вагон вăйлăн сиенленнĕ.

* * *

Нимĕçсен инçене вĕçекен разведчикĕсен 121-мĕш группинчи 4-мĕш отрядран тыткăна лекнĕ бортмеханик Георг Пауль çапла каласа панă: „Отрядра летчиксем нумай çитмеççĕ. Командовани стройран тухнисем вырăнне тылран 4 экипаж ярасса ĕнтĕ темиçе уйăх хушши кĕтет, анчах ку таранччен вĕсем кĕтни нимĕнсĕрех пулчĕ. Май уйăхĕн пуçлăмĕшĕнче вырăс авиацийĕ пирĕн аэродрома хаяррăн тапăнчĕ. Бомбăсем пăрахса, пирĕн 2 самолета пачах пĕтерчĕç, 10 самолета самаях сиенлерĕç. Çакăн хыççăн пирĕн отрядри летчиксем икĕ эрне хушши аэродромран пĕрре те вĕçсе тухман. Нимĕç авиацийĕн промышленноçне заменительсем анлăн кĕртсе пыни самолетсемпе моторсен пахалăхне начарлатса ячĕ. Кашни вĕçмессерен моторсене юсама тивет".

* * *

Греци халăхĕ фашистла захватчиксемпе алла хĕçпăшал тытса çапăçма массăллăн çĕкленет. Сиатист хули çывăхĕнче Греци партизанĕсем Итали çарĕсемпе икĕ кун çапăçнă. Çав çапăçура Греци патриочĕсем темиçе çĕр итальянеца вĕлернĕ тата 17 офицерпа 482 салтака тыткăна илнĕ. Кардицы çывăхĕнчи пĕр ялта грек хресченĕсем пĕр нимĕç отрядне тапăннă. 11 гитлеровеца вĕлернĕ, 3 автомашина тытса илнĕ. Коринфпа Афины хушшинчи чугунçул çинче железнодорожниксем нимĕç оккупанчĕсен хире-хирĕç пыракан икĕ поездне пĕр-пĕрин çине кĕртсе янă.

Июнĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 23-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Пирĕн карапсем Хура тинĕсре тăшманăн десант антармалли хăй тĕллĕн çӳрекен 2 баржине путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи пĕр участокра совет авиацийĕ тăшман позицийĕсем çине вăйлăн персе тăнă хыççăн пирĕн разведка тăвакан отряд нимĕç траншейисене кĕрсе кайнă. Пуçланса кайнă çапăçура разведчиксем 100 салтакпа офицертан кая мар пĕтерсе тăкнă, темиçе çынна тыткăна илнĕ. Тăшман оборонин системи çинчен паха сведенисем тупнă хыççăн разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă. Ытти участоксенче хире-хирĕç перкелесе тăнă. Пирĕн чаçсем нимĕç пехотине икĕ рота таран пĕтерсе тăкнă, артиллерипе миномётсен темиçе батарейине пусарнă.

* * *

Белгородран хĕвеланăçнерехре пĕр чаçăн подразделенийĕсем тăшман оборонине разведка тунă. Отделени командирĕ Копцев юлташ нимĕç дзочĕ патне вăрттăн шуса пынă та противотанковăй граната пăрахса ăна салтаксемпе пĕрлех сирпĕнтерсе янă. Пулемет расчечĕн командирĕ сержант Конев юлташ çапăçу вăхăтĕнче аманнă, анчах та пеме чарăнман. Вăл тăшман пулеметне пĕтерсе тăкнă, гитлеровецсен пысăк ушкăнне каялла тартнă. Красноармеец Максютин юлташ нимĕç траншейисем патне пытанса пынă та автоматпа персе 20 гитлеровеца вĕлернĕ. Красноармеец Скибин юлташ нимĕç траншейисене чи малтан кĕнисемпе пĕрле вăркăнса кĕнĕ те штыкпа чиксе, прикладпа çапса 15 гитлеровеца вĕлернĕ. Красноармеец Пархоменко юлташ пăшалпа персе тата штыкпа чиксе 20 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Çав çапăçура пирĕн подразделенисем пĕтĕмпе 200 салтакпа офицера ытла вĕлернĕ, хăйсен умне лартнă задачăна ăнăçлăн пурнăçланă.

* * *

Чугуевран хĕвелтухăçнерехре 2 нимĕç самолечĕ çĕр çине анса ларнă. Вĕсен летчикĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче разведка тăвакан ушкăнсем активлăн кĕрешнĕ. Пĕр участокра совет боецĕсем тăшман тылне кĕрсе кайнă та çул çинче засада тунă. Часах нимĕç отрячĕ курăнса кайнă. Гитлеровецсем çитесси 6—7 метр юлсан, разведчиксем хаяррăн персе янă. Нимĕçсем хăраса ӳкнипе çĕр çине йăвана-йăвана кайнă. Совет боецĕсем автоматсемпе персе тата штыксемпе чиксе 15 гитлеровеца вĕлернĕ; 5 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем тăшманăн 180 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Совет артиллеристсем тăшман позицийĕсем çине темиçе хутчен вăйлăн пере-пере илнĕ; нимĕçсен 13 дзотне тата 5 блиндажне çĕмĕрнĕ, 5 пулеметне пĕтерсе тăкнă, артиллерипе минометсен темиçе батарейине пусарса лартнă. Снайперсем кĕçĕн сержант Николай Залесский тата ефрейтор Зиновий Шарков пĕр кун хушшинче 11 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен карательнăй экспедицийĕпе темиçе кун хушши вăйлăн çапăçнă. Партизансем гитлеровецсене пите пысăк сиен кӳнĕ, вĕсене каялла чактарнă. Çав çапăçусенче совет патриочĕсем 80 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ; тăшманăн 2 танкне, 2 миномётне, 4 пулеметне тата 8 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Тăшманран 2 орудипе 30 винтовка, çăмăл автомашина тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Партизансен пĕр ушкăнĕ тăшманăн 2 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Нимĕçсен чугунçул юсакан чаçĕ вагонсен ванчăкĕсем айĕнче вилнĕ тата аманнă 211 нимĕç салтакĕпе офицерне кăларнă.

* * *

Карачай автономиллĕ облаçĕнчи ĕççыннисем нимĕç оккупанчĕсен пусмăрлăхĕнче 5 уйăх хушши асапланса пурăннă. Çав уйăхсем Карачай историйĕнчи чи йывăр та чи хăрушă уйăхсем пулнă. Гитлеровецсем вăл облаçăн пурлăхĕсене культурăпа истори тĕлĕшĕнчен хаклă япаласене те, станицăсемпе аулсенче мирлĕ пурăнакан халăха пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пынă. Микоян районĕнче нимĕç çынçиенĕсем старик сем пе хĕрарăмсене тата ачасене 860 çынна асаплантарса, персе вĕлернĕ. Зеленчук районĕнче фашистла ирсĕрсем мирлĕ пурăнакан 260 çынна вĕлернĕ. Преградненски районра гитлеровецсем 280 совет çыннине вĕлернĕ. Теберда курортĕнче гитлеровецсем пĕтĕм туберкулезĕнчен сыватакан санаторире пурăннă ачасене нумайĕшне вырăна асаплантарса вĕлернĕ. Нимĕçсем медицина работникĕсен пысăк ушкăнне арестленĕ те Теберда курортĕнчен 2 километр çурçĕртерехре ларакан ту патне илсе пынă. Унта палачсем çав çынсене вилĕ шăтăкĕсем чавма хушнă, унтан вара вĕсене пурне те персе вĕлернĕ. Темиçе çĕр совет çынни нимĕç тĕрмисемпе концентрациллĕ лагерьсенче вилнĕ. Совет халăхĕ ирсĕр тăшмана çав юнлă преступленисемшĕн нихăçан та каçарас çук, вăл фашистла çынвĕлересенсене вĕсен мĕнпур пискер ĕçĕсемшĕн тавăрĕ.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсемпе унăн войскисем çине бомбăсем пăрахни

Июнĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци тăшман аэродромĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пула аэродромсенче питĕ нумай пушар тухнă. Пушарсенче взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем темиçе районра нимĕç войскисем пуçтарăнса тăнă вырăнсене бомбăсем нумай пăрахнă. Тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине чылайах пысăк çухатусем кӳнĕ.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене тапăнни

Июнĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиацин пысăк вăйĕсем тăшман аэродромĕсене тапăннă. Аэродромри тăшман самолечĕсем çине, çавăн пекех тата аэродром районĕнче вырнаçнă горючипе боеприпассен складĕсем çине те бомбăсем нумай пăрахнă. Пирĕн бомбардировщиксен экипажĕсем пушарсем нумай тухнине тата вăйлă взрывсем пулнине асăрханă.

Пирĕн самолетсем, пĕринсĕр пуçне, пурте хăйсен базисене таврăннă.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсемпе Псков чугунçул узелне тапăнни

Июнĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци тăшман аэродромĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахса аэродромсенче нимĕç самолечĕсене чылай пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Псков чугунçул узелĕ çине вăйлăн çĕмĕрекен бомбăсем нумай пăрахнă. Чугунçул узелĕн пĕтĕм территорийĕ вăйлă пушарсем ярса илнĕ. Боеприпассемпе горючи склачĕсем тата тăшманăн чугунçул çинчи нумай эшелонĕсем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Пирĕн 2 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Иосиф Сталин маршала, ССР Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Главнокомандующине

КРЕМЛЬ, МУСКАВ

Нацистсен пуçлăхĕсем хăйсен икĕ питлĕ пулас йăлине тытса пырса Совет Союзне ултавлăн та варварла тапăннăранпа ыран икĕ çул тулать. Çапла туса вĕсем хăйсен тăшманĕсен шутне Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене те кĕртрĕç. Совет Правительствипе совет халăхĕ хăйсен çĕршывне хӳтĕлемешкĕн çар хăватне мĕн тери ӳстерсе çирĕплетнине нацистсен çав пуçлăхĕсем çителĕклĕ хак паман.

Юлашки икĕ çул хушшинче пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен паттăр ĕçĕсене тата вырăс халăхĕ калама çук пысăк жертвăсене çав тери паттăррăн чăтса ирттернине ытларах та ытларах савăнса сăнаса тăчĕç.

Пĕрлешӳллĕ мĕнпур нацисен пĕрлешнĕ хĕçпăшаллă вăйĕсен ӳснĕçемĕн ӳссе пыракан хăвачĕ, тăшмана хирĕç пыракан кĕрешĕве ытларах та ытларах хутшăнса пыракансĕр, тăшмана татăклăн çĕнтерес ĕçре пирĕн пĕрлĕх шухăшĕ пуррине тата эпир вăл ĕçре хамăра хамăр шеллесе тăманнине кăтартса парать. Çĕнтерӳ пĕтĕм тĕнче умне мир задачисене кăларса лартсан, çав шухăш пире çавăн пек задачăсене пурнăçлама тытăннă чухне те хавхалантарĕ.

Франклин Д. РУЗВЕЛЬТ.

ВАШИНГТОН, 1943 çулхи июнĕн 21-мĕшĕ

Михаил Иванович Калинина, СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне

МУСКАВ

Германи йыткĕтĕвĕсем Совет Союзне тапăнни икĕ çул тултарнă кун эпĕ Сирĕе, совет халăхне тата хастарлă Хĕрлĕ Çарăн паттăр войскисене Чехословаки халăхĕн ячĕпе пĕтĕм чĕререн саламлатăп, пирĕн татăклă çĕнтерӳ Эсир та та мĕнпур пĕрлешӳллĕ нацисем тăрăшнипе пула, пусмăрти халăхсене нацистла Германи туралăхĕнчен часах хăтарĕ тесе шанса тăнине пĕлтеретĕп.

ЭДУАРД БЕНЕШ.

Унăн Превосходительствине В. Молотова, Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарне

МУСКАВ

Гитлеровецсем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне тапăнни икĕ çул тултарнине палăртнă май, Сирĕн Превосходительствăна: пурнишĕн пĕр тăшман пулса тăракан захватчика хирĕç Хĕрлĕ Çарпа мĕнпур совет халăхĕсем икĕ çул хушши хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешсе пынипе Бельги правительстви çав тери савăнса хĕпĕртени çинчен пĕлтеретĕп. Çав паттăрлăх тăшмана чăсрах пĕтĕмпех çĕнтертĕр, вăл мĕнпур пĕрлешӳллĕ нацисем пĕр-пĕринпе татчăн тата пĕрмаях килĕштерсе ĕçлес условисенче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне вăраха пыракан мир тата ырлăх патăр тесе сунатăп.

СПААК,

Бельгин Ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ.

Британи тред-юнионĕсен делегацийĕ Мускава килнĕ

Мускава Британи тред-юнионĕсен делегацийĕ килнĕ. Делегаци составне çаксем кĕреççĕ: Британи тред-юнионĕсен Конгресĕн Генеральнăй Секретарĕ У. Ситрин г-н (делегаци руководителĕ), Британи тред-юнионĕсен Конгресри Генеральнăй Совечĕн членĕсем А. Конлейпа Г. Гаррисон господинсем тата В. Федер г-н (делегаци секретарĕ). Делегаци Англипе Совет профсоюзĕсен комитечĕн 13-мĕш сессинче ĕçлеме килнĕ.

Июнĕн 23-мĕшĕнче Британи тред-юнионĕсен делегацийĕ ВЦСПС-ра Англипе Совет профсоюзĕсен комитетĕнчи Совет делегацийĕн членĕсемпе, ВЦСПС секретарĕсемпе Н. М. Шверник тата К. И. Николаева юлташсемпе тата Центрти чугунçулсем çинче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн Тĕп Комитечĕн председателĕпе М. П. Тарасов юлташпа тĕл пулнă.

Каçхине делегаци Мускаври Горький ячĕпе тăракан академиллĕ художествăллă театрта пулнă. Унта вĕсем „Анна Каренина" спектакль курнă. Делегацие спектакль курма пынă халăх пĕтĕм кăмăлтан саламланă.

Нимĕç самолечĕсем Ленинград çывăхĕнчи халăх пурăнакан пĕр пункта тапăнни

Июнĕн 21-мĕшĕнче нимĕç самолечĕсем Ленинград çывăхĕнчи халăх пурăнакан пĕр пункта виçĕ хутчен тапăнма хăтланнă. Тăшманăн çав пункт çине вĕçсе кĕрсе кайнă уйрăм самолечĕсем пĕр тĕлли-паллисĕр бомбăсем пăрахнă. Вăл бомбăсем чугунçула сиенленĕ. Тапăнăва сирсе янă чух пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери 17 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн 9 самолет тĕпленнĕ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Июнĕн 22-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн черетлĕ IV-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленума ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ уçрĕ.

Пленум виçĕ ыйту сӳтсе-яврĕ: ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕн итогĕсем, 1943 çулăн малтанхи çуркунлĕнчи партие илес ĕçĕн итогĕсем тата организациллĕ ыйтусем.

ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕн решенийĕсем çинчен ВКП(б) Горкомĕн секретарĕ Романова юлташ доклад турĕ. Доклад хыççăн Полукаров, Наумова, Ардаматский, Рыбакова, Аникин тата Ловягин юлташсем тухса калаçрĕç.

Докладчик тата тухса калаканисем çакна палăртрĕç: кăçал çураки ĕçĕсене халиччен хинчен йĕркеллĕрех те лайăхрах ирттернĕ. Çуракине уйрăмах Максим Горький ячĕпе тăракан, «Красная Волга» колхозсем, чăлха фабрики тата больница лайăх ирттернĕ. Предприятисенчи подсобнăй хуçалăхсем акмалли çĕр лаптăкне иртнĕ çулхипе танлаштарсан 526 гектар ытларах ӳстернĕ. Рабочисемпе служащисен пахчисенче 160 гектар ытла çĕрулми тата пахча-çимĕç лартнă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те паллă çитĕнӳсем пунă. Майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 11 процент, сыснасен хисепĕ 50 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 49 процент ӳснĕ. Çакна пула хулари колхозсем государствăна ал-какай вăхăтра парса татрĕç, подсобнăй хуçалăхсенче рабочисене апатлантарас ĕçе лайăхлатмалли материаллă база саккăл пырать.

Кунпа пĕрлех хулари колхозсемпе подсобнăй хуçалăхсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Калчасене пăхса çитĕнтерес ĕçе начар организациленĕ. Уборкăна хатĕрленес ĕç те тивĕçлипе пулса пымасть. Выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçри обезличкăна пĕтермен, çакă вара колхозсенчи тата подсобнăй хуçалăхсенчи выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне чакарасси патне илсе пырать. Çак çитменлĕхсене пулах кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче çамрăк выльăхсем чылай вилнĕ. Çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Пленум уйрăмах агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăхрах йĕркелесси, политикăллă агитацин пахалăхне лайăхлатасси çине савăрăнса пăхма кирлине кăтартса пачĕ. Агитаци ĕçне тĕрлĕ формăсемпе туса пымалла, витĕмлĕ те ĕçлĕ агитацишĕн кĕрешмелле, хула ĕççыннийĕсене çарпа хуçалăх задачисене пурнăçлама, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыма, геройла Хĕрлĕ Çара пулăшассине вăйлатма мобилизацилемелле.

Иккĕмĕш ыйтупа кăçал çурçул хушшинче парти ретне илес ĕç мĕнле пулса пыни çинчен—ВКП(б) Горкомĕн секретарĕ Федоров юлташ доклад турĕ.

— Нумай пуçламĕш парторганизацисем,—тет докладчик,—юлашки вăхăтра парти ретне илес ĕçе лайăхлатрĕç. Милютинăри механизациленĕ вăрман пунктĕнче, сăмахран, кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче парти ретне 11 çынна, милицин хулари уйрăмĕнче—11 çынна, Госбанкра—8 çынна, больницăра—5 çынна илнĕ.

Пĕтĕм хулипе çурçул хушшинче парти ретне 300 çынна ытла илнĕ. Вĕсем пурте—предприятисемпе учрежденисенче малта пыракансем, стахановецсемпе ударниксем, совет интеллигенцийĕн чи лайăх представителĕсем.

Анчах хăшпĕр парторганизацисем партин Шупашкар хулинчи VIII-мĕш конференцийĕн тата III-мĕш пленум решенийĕсенчен тивĕçлĕ вывод туман-ха. Вĕсем хăйсен коллективĕсенче партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатма пултараймарĕç, çавна пула парти ретне ӳстерес тĕлĕшпе те ӳсĕм памарĕç. Кăçал, сăмахран, иккĕмĕш номерлĕ шкулти, тир-сăран комбинатĕнчи, ликерпа эрех заводĕнчи, «Росглаввино» комбинатĕнчи, столовăйсемпе ресторансен трестĕнчи парторганизацисем пачах ӳсмен. Çавăн пекех табак фабрикинчи, Апăл лешъенчи торф предприятийĕнчи, техно-ткацки фабрикăри, Стройтрестри т. ыт. парторганизацисем те хăйсен ретĕсене ӳстерес тĕлĕшпе начар ĕçленĕ. Вĕсенче парти ретне ӳстермелли майсем пысăк.

Уйрăм парторганизацисем (кирпĕч заводĕнчи, çăкăр пĕçерекен комбинатри, Академи театрĕнчи) партие илес ĕçе формăшĕн çеç тата сиелтен тума пăхрĕç. Партие илес ыйтусене хăшпĕр чухне нимĕн сӳтсе-явмасăрах татса панă. Çавна пула хăшпĕр парторганизацисем парти ретне ĕçре тĕрĕсленмен тата парти ретне кĕме тивĕçсĕр çынсенех илнисем те пулнă. Çак йăнăшсене ВКП(б) Горкомĕн бюровĕнче тӳрлетме лекнĕ.

Докладчик уйрăмах рабочисемпе комсомолецсене партие илес ĕç çителĕксĕррине палăртрĕ.

Пренире Брикер, Каменецкий, Трусова тата Литвиненко юлташсем тухса калаçрĕç. Вĕсем партие тăман рабочисемпе служащисем тата колхозниксем хушшинчи партиллĕ-политикăллă ĕçе малалла татах та лайăхлатма кирлине кăтартса пачĕç. Вĕсене обществăллă ĕçсене активлăн явăçтармалла, вĕсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлемелле, малта пыракан шанчăклă çынсене партие кĕме пулăшмалла, парти ретне илнĕ чухне кашни çынна уйрăмăн пăхса тухас принципа пăхăнса пымалла.

Пленум пур ыйтусем тăрăх та тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ. ВКП(б) горкомĕн бюро членĕсен составне пленум Л. К. Щербаковăпа М. Л. Брикер юлташсене кĕртрĕ.

Республика уйхирĕсенче

РЕСПУБЛИКĂРА ÇĔРТМЕ ТĂВАС ТАТА ÇУМ ÇУМЛАС ĔÇ ИЮНĔН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

РАЙОНСЕМ	Çĕртме туни (процентпа)	Тĕштырăсене сумлани (процентпа)	Техникăлла культурăсене сумлани (процентпа)	Пахча-çимĕçсемпе çĕрулмисене сумлани (процентпа)
Улатăр	13,9	26,8	12,1	8,1
Элĕк	65,1	47,5	29,9	10,1
Вăрнар	60,4	21,8	15,5	6,2
Йĕпреç	51,2	21,0	6,0	4,3
Ишлей	70,0	37,5	—	2,6
Калинино	65,9	40,4	26,5	9,7
Канаш	58,3	77,4	9,4	—
Куславкка	54,1	24,2	—	4,2
Комсомольски	58,8	41,5	44,1	8,7
Красноармейски	54,1	13,2	19,3	2,2
Хĕрлĕ Чутай	28,5	30,8	50,9	6,7
Кувакино	6,8	1,4	—	—
Сĕнтĕрвăрри	48,4	22,4	—	3,1
Октябрьски	45,6	23,2	9,8	1,7
Первомайски	20,1	19,1	49,3	1,1
Пăрачкав	3,3	29,5	64,1	1,4
Советски	61,2	68,1	82,5	2,8
Сĕнтĕр	62,6	29,7	16,2	4,7
Вăрмар	53,6	19,1	—	1,2
Çĕрпÿ	72,1	67,7	110,9	7,2
Шупашкар	94,0	27,6	100,0	11,4
Чкаловски	37,2	44,7	—	—
Шăмăршă	29,1	35,3	36,2	21,6
Шăхасан	60,4	51,1	45,8	13,2
Çĕмĕрле	27,4	44,3	45,0	10,7
Етĕрне	69,3	22,3	27,5	29,2
Елчĕк	72,8	61,9	37,6	5,2
Тăвай	40,3	84,8	40,2	1,8
Шупашкар хули	85,0	53,6	—	1,42
ЧАССР тăрăх	49,3	38,9	34,9	6,6

Асăрхаттарни: Пăрачкавпа Улатăр районĕсенче çĕртме тăвас тата çум çумлас ĕç июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартнă.

Государствăна—лайăх утă

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (**Телефонпа**). Утă çулма хатĕрленсе çитнĕ колхозсем çавансем çине тухрĕç. Утă çулас ĕç хĕрÿллĕн пуçланса кайрĕ.

«Дубовка» колхоз виççĕмĕш кун, «Новая жизнь» колхоз иккĕмĕш кун, «Янга Турмыш» колхоз тăваттăмĕш кун утă çулаççĕ.

Ку колхозсенче сенокосилка çук, анчах вĕсем çавасене кирлĕ таран хатĕрлесе туптаттарнă, лапаткасем кирлĕ чухлех пур, кĕреплеллĕ çавасем те тунă.

Çавăнпа та çулакансем малтанхи кунран пуçласах хăйсен нормине ытлашшипех тултарса пычĕç.

Çак колхозсем малтанхи чи лайăх утта государствăна параççĕ.

Л. ИМЕРКИНА,
Райçĕрĕç пайĕн агрономĕ.

Калаçнипех ĕç пулмасть

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Утă çулма вăхăт çитрĕ. Малта пыракан «Янмурзино», «Прогресс» тата «Чамыш» колхозсем утă çулма тухма хатĕр. «Чамыш» колхоз (председателĕ Павлов юлташ) косилкăсене, çавасене, транспорт инвентарĕсене тата ыттисене те хатĕрлесе çитернĕ. «Янмурзино» колхоз та çавасене, кĕреплесене, турттармалли урапасене пĕтĕмпех хатĕрлесе хунă. Колхозниксене утă çулма тухасси çинчен пĕлтернĕ.

Анчах районра, пĕтĕмĕшпе илсен, ку ĕç начар пырать-ха. Нумай колхозсем утă çулма тухма сÿрĕк хатĕрленеççĕ.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕнче те кун пирки калаçаççĕ кăна, кирлĕ мерăсем йышăнни çук.

С. ШАДИН.

Уборкăна хатĕр

ШĂХАСАН. (**Хамăр корр.**). Енĕшри **Максим Горький** ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунист Афанасьев юлташ) кăçалхи çуракине 8 кун хушшинче иртерсе, çураки планне 110 процент пурнăçланă, оборона фончĕ валли 8 гектар сĕлĕ акса хăварнă.

Агротехника кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа, çурхи тырăсен 75 процентне ытла машинăсемпе акнă. Çурхи калчасем тикĕс шăтса тухнă.

Колхозниксем халĕ тырпула лайăх пăхса ÿстерессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Паянхи куна 238 гектар çурхи тырăсене, 45 гектар кĕрхи тырăсене, 10 гектар клевера пĕр хут çумланă. Халĕ иккĕмĕш хут çумлама тытăннă. Çум çумлана çĕре Е. Петрова, А. Желаева, М. Васильева, М. Николаева колхозницăсем ирхирех тухса сĕм тĕттĕмччен ĕçлеççĕ.

Колхоз ирхи çĕртме тумалли плана та тултарчĕ. Пурĕ 180 гектар ирхи çĕртме туса хăварнă.

Уборкăна хатĕрленес ĕçе колхоз ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсаса хатĕрленессинчен тытăнчĕ. Колхозăн 2 жнейка, пĕр молотилка пур. Вĕсене колхоз тимĕрçи Николай Яковлев юсаса лартрĕ. Халь вăл çавасем туптать, çурласем шăллать.

Колхозниксем тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленнĕ май çĕнĕрен 44 сÿс вĕрен, 44 тилхепе хатĕрлерĕç, 24 урапа юсарĕç. Çак кунсенче çĕнĕрен 22 урапа туса хатĕрлерĕç. 58 кĕреплеллĕ çава турĕç. Колхозниксем ĕç хатĕрĕсене пĕр çĕре типтерлесе хучĕç.

Транспорт инвентарĕсемпе усă курас тата вĕсене пăхса усрас ĕçре колхоз çирĕп йĕрке турĕ. Лаша кÿлмелли хатĕрсене пĕр çĕрте усраççĕ. Вĕсемшĕн старши конюх ответлă пулса тăрать.

Колхозăн уборкăна тухма транспорт инвентарĕсем çителĕклĕ. Колхоз кăçал тырă вырма пуçласан виççĕмĕш куннех авăн çапма шутлать. Çавăнпа та халĕ хĕрсех итемсене тасатаççĕ.

Нумаях пулмасть колхозниксем Иваново облаçĕнчи Родниковски районри Остренцово колхоз членĕсен чĕнĕвне сÿтсе-яврĕç. Вĕсем ирĕке кăларнă районсенчи колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе йĕркелеме 2 пăру, 2 сысна, 5 сурăх çитĕнтерсе пама пулчĕç.

Колхозниксен активлăхĕ йăлтах коммунистсем мĕнпур ĕçе пĕлсе ертсе пынинчен килет. Коммунистсем пур ĕçре те пример кăтартса пыни колхозниксен активлăхне ÿстерет.

Васса Сергеева, Анна Ильина, Лука Павлов коммунистсем — колхозри чи активлă агитаторсем. Вĕсене колхозниксем ырлаççĕ, хисеплеççĕ.

Йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕх ÿстерессишĕн кĕрешетпĕр

Иртнĕ çулта Элĕк районĕ выльăх-чĕрлĕх йышне чылай ÿстерчĕ. Кăçал тата нумайтарах ÿстерме тăрăшать. Районри колхозниксемпе колхозницăсем, фермăсенче ĕçлекен работниксем тата пур специалистсем те кăçал татах та лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç.

1943 çулхи июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетмелли плана сыснасем енĕпе 119 процент, сурăхсем енĕпе 118 процент, ĕне-вăкăрсем енĕпе 100,2 процент, лашасем енĕпе 100,6 процент тултарнă. Январĕн пĕррремĕшĕ тĕлне сыснасен хисепне 29 процент, ĕне-вăкăрсен хисепне 20 процент, сурăхсен хисепне 14 процент ÿстернĕ. Çавăн пекех пур тĕрлĕ ама выльăхсем тĕлĕшпе те кăçалхи плана ытлашшипех пурнăçланă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кăçал эпир пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех ... выльăхсене тĕрĕс пăхса çитĕнтерсе тата колхозниксен çамрăк выльăхĕсене контрактацилесе тултарма пултăмăр. Ку ĕçре «**Красная заря**» колхозри ферма (заведующийĕ—коммунистк Чапраева тата колхоз председателĕ—отечественнăй вăрçă инвалиде Огурцов юлташсем) пур тĕрлĕ выльăхсем тĕлĕшпе те плана ытлашшипех тултарнă. Кăçал 5 уйăх хушшинче 28 сысна аминчен 16-шар çăвăр илсе, пурне те тĕрĕс пăхса усранă.

Район шултăра выльăхсене ĕрчетес енĕпе плана ытлашшипех тултарнă пулсан та, чăх-чĕп, хуф-кăвакал, кроликсем ĕрчетмелли плана тултарас ĕç çителĕксĕр пырать-ха. Кунсăр пуçне, 5 уйăх хушшинче плана пăрусем илес тĕлĕшпе 109 процент, сыска çурисем илес тĕлĕшпе 68 процент, путексем илес тĕлĕшпе 85 процент çеç тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ÿстерес ĕçсенче выльăх апачĕ чи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕçре эпир кăçал утălăх валли çĕлĕ 505 гектар, клевер 1,142 гектар, тымар-çимĕçсем 180 гектар тата планран ирттерсе ферма участокĕсенче çĕрулмипе тымарçимĕçсем 138 гектар акса хăвартăмăр. Паянхи куна ферма работникĕсен пайĕпе кăна 117 тонна силос хывса хатĕрленĕ тата 700 лав ытларах сулçăллă апатсем хатĕрленĕ. Халĕхи вăхăтра районра силос хывас, сулçăллă апатсем хатĕрлес ĕçсем анлăн сарăлса пыраççĕ. Пур колхозсем те утă çулма тухма хатĕрленсе çитрĕç.

Эпир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн хăвăртлăхне халĕхи вăхăтринчен темиçе хут ÿстерсе, чăн та фронтри пек ĕçлесе, хамăр умма лартнă задачăсене çирĕппĕн пурнăçласа пырса, Чăваш республикин Совнаркомĕпе Парти Обкомĕн çуçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илессишĕн кĕрешетпĕр.

А. ВОЛКОВ.
Элĕн райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Республикăри оргкомитетра

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи виççĕмĕш кросне ирттерес тĕлĕшпе ĕçленĕ оргкомитет республикăри кросăн итогĕсене пăхса тухнă.

Кроса лайăх организацилесе ирттернĕшĕн оргкомитет Шупашкар хулине (ВЛКСМ горкомĕн секретарĕ Трусова юлташ) тата Етĕрне районне (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Бурашников юлташ) куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавсем памалла тунă.

Кроса ирттерес ĕçри лайăх тĕслĕхсемшĕн республикăри комсомолпа профсоюзăн чылай организацийĕсене, ирĕклĕ спорт обществисен коллективĕсене, предприятисемпе колхозсене, учрежденисене ВЛКСМ Обкомĕн тата физкультурăпа (спорт ĕçĕсен республикăри комитечĕн хисеплĕ грамотисене парса награтăланă.

Çавăн пекех кроса лайăх ертсе пынă уйрăм юлташсене те хисеплĕ грамотăсем панă.

Районсенчи парторганизацисен пухăвĕсем

СĔНТĔР

Коммунистсен районри пухăвĕ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XV-мĕш пленумĕн итогĕсене сÿтсе-яврĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерсе, районри колхозсем кăçал çуракине иртнĕ çулхинчен вунă кун маларах туса ирттернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма планран ирттерсе 350 гектар тырă акнă, пахча-çимĕç лартса хăварнă. Уйрăм колхозсем республикăри тата районри Хисеп хăмисем çине кĕме тивĕç илнĕ. Анчах районри пур колхозсем те çуракине ăнăçлăн ирттернĕ теме çук. Ахмане, Калайкасси ялсовечĕсенчи колхозсем, сăмахран, çĕрулми тата кантăр акмалли плансене пурнăçа кĕртеймен.

Çураки ăнăçлăхĕ парторганизацисем вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе лайăх ертсе пынинчен килнĕ. Шомикри „Колос" колхозри парторганизаци (секретарĕ Ефремов юлташ) çураки ĕçĕсене конкретно ертсе пынă. Халĕ колхоз уборкăна тимлĕн хатĕрленет. Ирхи çĕртме тумалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă. Кĕске вăхăт хушшинчех 100 тонна ытла силос хывнă.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, ирхи çĕртме тăвас, силос хывас тата çум çумлас ĕçсем районра тивĕçлипе пулса пымаççĕ-ха. Июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне çĕртме планне район çурри чухлĕ те пурнăçа кĕртеймен. Кăпас, Муркаш, Ярославка, Çатракасси, Тепте ялсовечĕсенчи колхозсем калама çук юлса пыраççĕ.

Уборка машинисене юсас ĕççен хăвăртлăхĕ те çителĕксĕр-ха. Паянхи кун тĕлне 200 жнейкăран 93-шне, 52 сенокосилкăран 18-шне, 8 комбайнпа 20 молотилкăран 6 комбайнне, 3 молотилкăна çеç юсанă.

Район обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă. Майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 29 процент, сыснасен хисепĕ 44 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 71 процент ÿснĕ. 101 колхозран 47-шĕ плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе пурнăçланă. Анчах уйрăм колхозсенче ку ĕç çаплипех çителĕксĕр. Хăшпĕр колхозсем выльăхсене пăхса çитĕнтерес, вĕсен продуктивноçне ÿстерес тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ.

Агитациллĕ ĕç халĕ чылай сÿрĕкленни сисĕнет. Ку ыйтăва районри 3—4 пуçламĕш парторганизацире çеç коммунистсен пухăвĕсенче сÿтсе-явнă. Ытти организацисем кăçалхи пиллĕк уйăх хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕç çинчен сăмах та хускатман.

Пуху вулав çуртсемпе клубсем çителĕксĕр ĕçленине, парторганизацисем вĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн тăрăшманнине палăртрĕ. Ялти çутĕç учрежденийĕсем валли уйăрнă укçапа туллин усă курмаççĕ.

Пуху ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ палăртнă çитменлĕхсем пирĕн районри парторганизаци ĕçĕнче те пуррине кăтартса пачĕ. Уборкăна ирттерме лайăх хатĕрленсе çитме пуху коммунистсене колхозниксен массине вăйлăн мобилизацилесе тăма хушрĕ.

А. СОЛОВЬЕВ

КОМСОМОЛЬСКОЕ

Коммунистсен районри пухăвĕ парти Обкомĕн XV-мĕш пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-явас ыйтупа пулса иртрĕ. Унта ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Георгиев юлташ доклад турĕ. Пренире 19 çын тухса каларĕç.

Докладчикпе тухса калакансем район çуракине хатĕрленсе ирттернĕ вăхăтра, ирхи çĕртме тăвас, çум çумлас тата уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕç.

Пуху район ирхи çĕртме тăвас тата çум çумлас енĕпе çителĕксĕр ĕçленине тата ку ĕçе хăвăртлатмалли мерăсене палăртрĕ.

Уборка машинисене юсас ĕç те сÿрĕк пырать. МТС 16 комбайнран 5-шне çеç юсаса лартнă. Пуху ку ĕçе хăвăртлатма хушрĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те çитменлĕхсем пур. 1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана 16 колхоз çеç тултарнă. Кунсăр пуçне выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерессишĕн начар кĕрешеççĕ. Ку ĕçре сÿрĕк ĕçлекен коммунистсем те пур-ха. „Красный борец" колхозра ферма заведующийĕ пулса коммунист ĕçлет. Унта 18 ĕнерен те 40 литр сĕт çеç суса илеççĕ. „Янга Турмыш" колхозри парторганизаци (секретарĕ Иштяков юлташ) колхоз производствине кирлĕ пек ертсе пымасть. Çавна пула унта çураки вăраха тăсăлнă. Колхоз уборкăна çителĕксĕр хатĕрленет. Тырă вырмалли машинăсене вăраххăн юсаççĕ.

Тухса калакансем районра агитациллĕ-массăллă ĕç начар пулса пынине кăтартса пачĕç.

Пуху ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ йышăннă решенисене хăвăртрах пурнăçа кĕртмелли майсене палăртса хăварчĕ.

В. АНДРЕЕВ.

Фронтовой вунăкунлăхра

Чугунçул валли вутă хатĕрлемелли фронтовой вунăкунлăхăн малтанхи кунĕсенче Сĕнтĕрвăрри, Элĕк, Ишлей районĕсем организованно ĕçлерĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕ май-июнь уйăхĕсенче вутă хатĕрлес плана 102 процент пурнăçларĕ. Халĕ район иккĕмĕш çурçул планне пурнăçлассишĕн хĕрсех ĕçлет. Ишлей районĕ çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлемелли задание 92,9 процент, турттармалли плана 94,6 процент тултарнă. Çавăн пекех Элĕк районĕ те вутă хатĕрлес графика 87 процент ытла пурнăçларĕ.

Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, республикăра фронтовой вунăкунлăх вăраххăн пырать-ха. Улатăр, Шăмăршă, Калинино, Красноармейски районсем чугунçул валли вутă хатĕрлес плана çуррине яхăн çеç пурнăçланă. Улатăр районĕнче çак ĕçе плана кашни кун çуран 63 çын, лашапа 52 çын тухмалла пулсан, тăватпилĕк кун хушшинче çуран 38 çын, лашапа 22 çын çеç тухса пычĕç. Район вутă хатĕрлес плана 39,2 процент, турттарас плана 51,2 процент пурнăçланă. Шăмăршă районĕнчен кашни кун çак ĕçе çуран 78 çын тухас вырăнне 39 çын çеç тухать. Паянхи куна район вутă хатĕрлес плана 14 процент çеç пурнăçланă. Калининăпа Красноармейски районсенче те вутă хатĕрлес ĕçе çынсем кирлĕ чухлĕ мобилизацилемен. Çавна пула халĕ ĕнтĕ вĕсем юлса пыраççĕ. Калинино районĕ июнĕн 23-мĕшĕ тĕлне май—июнь уйăхĕсенче вутă хатĕрлемелли плана 15 процент кăна пурнăçланă. Фронтовой вунăкунлăхра ку районран 63 çын ĕçлемелле, анчах халĕ 19 çын çеç ĕçлет-ха. Ялсовет исполкомĕсен председателĕсемпе колхоз председателĕсен фронтовой вунăкунлăхра вутă хатĕрлес ĕçĕн графикне пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

Çулйĕр ĕçне хакламан çĕрте

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри малта пыракан колхозсем çулйĕр уйăхлăхĕнче тимлĕн ĕçлеççĕ: «Свобода»; «Малалла» колхоз членĕсем вăрçă вăхăтĕнче çулйĕр ĕçĕ уйрăмăнах ответлă ĕç пулса тăнине лайăх ăнланнă. «Свобода» колхозăн план тăрăх 102 кубометр çĕр чавмалла, 90 кубометр чул турттармалла. Паянхи куна вăл пĕтĕм çулйĕр ĕçĕн 90 процентне пурнăçланă. Ку ĕçре 15 çын, 7 лаша пĕр кун сиктермесĕр ĕçленĕ.

Районĕпе илсессĕн, çулйĕр ĕçĕ кая юлса пырать. Июнĕн 22-мĕшĕ тĕлне район уйăхлăх графикне 16 процент кăна пурнăçланă. Уйăхлăхра Мартынкасси ялсоветĕнчи колхозсем калама çук япăх ĕçлеççĕ. «Звезда» колхозăн (председателĕ Семенов) 330 кубометр çĕр чавмалла, 100 кубометр йывăç касса хатĕрлемелле пулсан, паянхи куна вăл çак ĕçе пуçăнман та. Семенов юлташ çулйĕр ĕçĕпе пĕрре те интересленмест, çул çинче миçе çын ĕçленине те пĕлмест. Çавăн пекех «Красный восток» колхозра та ку ĕç çителĕклĕн пулса пымасть. Колхоз председателĕ Филиппов юлташ çулйĕр ĕçне бригадирсем çине йăвантарнă та хăйне ку ĕçре ответлă тесе шутласшăн мар.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ çулйĕр ĕçне çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ мобилизацилемен. Ку ыйтупа вĕсем сайра-хутра çеç интересленеççĕ.

С. ШАДИН.

Задание ăнăçлăн пурнăçлаççĕ

ÇĔРПУ. Леваневский ячĕпе тăракан колхозăн (председателĕ И. Клементьев юлташ) çулйĕр уйăхлăхĕнче план тăрăх 70 кубометр чул кăлармалла; çулйĕр юсанă çĕрте çуран тата лашапа ĕçлемелле. Колхоз председателĕ Клементьев юлташ çак ĕçе туса пыма ĕç вăйĕ çителĕклĕ уйăрса хунă. Паянхи куна колхоз 60 кубометр ытла чул кăларнă. Хăйне панă задание вăл çак кунсенчех пурнăçлать. Çулйĕр ĕçĕнче ĕçлекенсем ĕç кунĕпе туллин усă курччăр тесе, колхоз вĕсем валли вăхăтра апат-çимĕç тăратать.

Çавăн пекех Кÿршĕри «Ильич» колхоз та çулйĕр уйăхлăхĕн заданине ăнăçлăн пурнăçлать.

И. М.

Тăрăшса ĕçлеççĕ

ВАРНАР. Районри колхозсем çулйĕр уйăхлăхĕн графикне ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Кумаш, Уравăшри «1-ое Мая», Хирпуçри тата Анаткас Уравăшри колхозсем çулйĕр ĕçĕн графикне срокчен пурнăçларĕç. Асăннă колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем ĕçре кашни кунах заданиене 150—200 процента çити тултарса ĕçлеççĕ.

Çулйĕр ĕçĕнче ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе аван йĕркеленĕ. Ку тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕнчен уйăрса янă С. Федоров, И. Гурьев юлташсем аван ĕçлеççĕ. Вĕсем кану вăхăтĕнче ĕçлекенсемпе калаçусем туса ирттереççĕ.

Паянхи куна районри çулйĕрсене пурне те юсаса çитернĕ. Халĕ ытти районсенчи çулсене юсама тытăнчĕç.

Ют çĕршывсенче

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

Союзниксен авиацийĕ ерманипе Италие, Çурçĕр Франципе Бельгие тата Голландие тапăнни

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Фридрихсхафенри радиоаппаратура заводне тапăннă. Пăрахнă бомбăсем завода пысăк сиен кÿнĕ. Çав завод вăл радиопеленгаторнăй установкăсем туса кăларать. Германин чи пысăк заводĕсенчен пĕри пулса тăрать.

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июнĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Рейн облаçĕнчи Крефельда питĕ хаярран тапăннă. Акăлчансен 44 бомбардировщикĕ хăйсен базисене таврăнман.

Июнĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Тăшманăн Пуари (Çурçĕр Франция) аэродромне атакăланă.

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 22-мĕшĕнче ирхине Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Рур облаçĕнчи тата Бельгири объектсене тапăннă. Америка бомбардировщикĕсене Англипе Америка истребителĕсем, çавăн пекех тата союзниксемпе доминионсен истребителĕсем те хÿтĕлесе пынă.

Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Веллингтон» йышши бомбардировщиксем Неапольри объектсене тапăннă. Ĕнер кăнтăрла çав объектсем çинех «Вĕçекен крепость» йышши самолетсем бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ Каиртан çапла пĕлтерет: июнĕн 21-мĕшĕнче кăнтăрла «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Реджо-ди-Калабрипе Сан-Джованние (Итали) атакăланă. Тăшман объекчĕсем çине 130 тонна яхăн фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, Гульсри синтетически каучук заводĕ çине тата Антверпен сывăхĕнчи «Дженерал моторс» фирмăн автомобильсем тăвакан заводĕ çине бомбăсем нумай пăрахнă. Çак икĕ объект районĕсенче те вăйлă пушарсем тухнă. Тăшман самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Англи бомбардировщикĕсем Роттердамри доксене тата суднăсем тăвакан верфьсене атакăланă. Бомбардировщиксене союзниксен истребителĕсен йышлă эскадрильисем пулăшса пынă. Çав мĕнпур операцисенчен 24 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Каçхине Англи авиацийĕ Голланди сыранĕсем сывăхĕнче тăшманăн вăйлă хурал хÿтĕленипе кăнтăралла каякан суднисен караванне атакăланă. Тăшманăн хуралта пыракан 5 карапне шыва путарнă.

Июнĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Мюльхеймри (Рур) темиçе объекта питĕ вăйлăн тапăннă. Пушарсем нумай тухнине тата взрывсем нумай пулнине палăртнă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче союзниксен авиацийĕ Неапольрен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Салернăна атакăланă.

Англи королĕ Мальтăна пынă

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕшĕ. ТАСС). Англи королĕ июнĕн 20-мĕшĕнче Мальтăна пынă, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви.

ГЕРМАНИ ХАЛĂХĔ ХУШШИНЧЕ ИРĔКСĔРЛЕСЕ ТУМТИР ПУХАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла влаççем Германи халăхĕ хушшинче ирĕксĕрлесе тумтир тата атă-пушмак пухаççĕ. Гитлеровецсем юрăхсăра тухнă çĕтĕк-çатăка та илмесĕр хăвармаççĕ. Нимĕçсен «Прейссише Цейтунг» ятлă хаçачĕ ирĕксĕрех йышăннă тăрăх, «юлашки кунсенче хаçатсем, плакатсем, радио тата кино та нимĕç халăхне пир-авăрпа атă-пушмак пухас кампани пыни çинчен пĕрмаях асăрхаттарса тăраççĕ пулин те». Германи халăхĕ çав мероприятие хирĕç тăрать. «Прейссише Цейтунг» персе янă тăрăх, влаççем çавăнпа та ĕнтĕ тумтир пухас тĕлĕшпе халăха уççăнах ирĕксĕрлеççĕ, массăллă ухтарусем тăваççĕ.

Иден Майский юлташ патĕнче пулни

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян кăнтăрла ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден, гитлерла Германия Россиăна тапăннăранпа икĕ çул тултарнă май, совет посолĕ Майский юлташ патне пынă. Вăл Майский юлташа Англи правительстви Совет Союзне ырă сунни çинчен пĕлтернĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔН ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇИ ИКĔ ÇУЛ ТУЛТАРНĂ МАЙ АНГЛИРЕ МИТИНГСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер, Совет Союзĕн отечественнăй вăрçи икĕ çул тултарнă кун, пĕтĕм Англире митингсем пулса иртнĕ. Вĕсем пурте Англипе Совет пĕрлĕхне палăртнă. Хемпстедра (Лондонăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕ) митинг умĕн демонстраци пулнă. Бирмингамри митинга хулари нумай обществăсен представителĕсем хутшăннă. Стейнс хулинче (Мидлекс графстви) Англипе Совет эрни организациленĕ. Çав майпа пулса иртнĕ митинга вырăнти оборона отрячĕсем, обществăллă организацисен тата граждăн оборони отрячĕсен представителĕсем хутшăннă. Хейс хулинче (Медлекс графстви) концерт пулса иртнĕ. Концертра совет юррисене юрласа панă.

Çавăн пекех тата Глазгора, Эдинбургра тата Шотландири ытти нумай хуласенче те пысăк митингсем пулса иртнĕ.

Слау хулинчи митингра Англин сутĕç министрĕ Баллер сăмах тухса каланă.

Нумай митингсенче халăх хушшинче пухнă укçасене Совет Союзне пулăшмалли фонда панă.

„Ăмăрткайăк" поэмăна вĕренеççĕ

Кăçал чăваш поэчĕ Аркадий Эсхель Совет Союзĕн Геройĕ Орлов юлташ çинчен «Ăмăрткайăк» ятлă поэма çырса кăларчĕ. Ăна «Чăваш Коммуни» хаçат çинче пичетлесе пычĕç.

Поэмăна вулакансем нумай пулчĕç, хаçатăн кашни номернех, поэмăн малалли сыпăкĕсем пичетленмен-ши тесе кĕтсе тăратчĕç.

Патăрьелĕнчи (Çĕрпÿ районĕ) кĕçĕн вăтам шкулта вĕренекенсем те поэмăна пĕтĕмĕшпех вуласа тухрĕç. Шкул директорĕ А. Садиков çапла калать: «Эпĕ ăна пĕр йĕрке сиктермесĕр вуласа пытăм. Унсăр пуçне, шкулта 5-мĕш классенче программăна кĕрекен материалсене вĕреннĕ пекех вĕрентĕмĕр, 6-мĕшпе 7-мĕш классенче ахаль вуласа пытăмăр», тет.

Вĕренекенсем «Ăмăрткайăк» поэма тăрăх контрольлĕ ĕç çырнă. Лайăх çырнă.

— Эпир хамăр земляк-герой пек хăюллă та паттăр çынсем пулма тăрăшатпăр, — теççĕ вĕренекенсем.

Ив. МАЛГАЙ.

Радио итлесче

Киле радио кĕртнĕ çĕртен никамăн та радио итлемесĕр ларас килмест. Кашни çын Совет информаци Бюровĕ паракан хыпарсене, республикăри, ют çĕршывсенчи хыпарсене тата ыттине те итлеме тăрăшать. Шупашкар радиоузелĕнче ĕçлекенсем çавна халĕ те ăнланасшăн мар пулмалла: репродуктор, радио линийĕ пăсăлас мĕн пулсан, вĕсемпе ĕç кăларма питĕ йывăр.

Акă Волгострой урамĕнчи 1-мĕш номерлĕ суртра майăн юлашки кунĕсенче вăйлă çумăр чух радио линийĕ пăсăлчĕ. Унтанпа икĕ-виçĕ эрне иртрĕ, анчах ку суртра пурăнакансем çаплах радио итлеймеççĕ.

Линие юсаттарас пирки çыхăну суртĕнчи радио итленĕшĕн укçа илекен кассăна, радиоузела йăлăхтарса çитернĕ ĕнтĕ. Унта ĕçлекенсемшĕн пур-пĕрех, паян наряд çыратпăр, ыран çыратпăр, тесе çеç лăплантарса кăларса яраççĕ. Радио çав суртра паян кун та никамăн та каламасть.

Хăçан итлемелле туса парĕç-ши вĕсем?

И. Г.

ХРОНИКА

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ РСФСР Совнаркомĕн Председателĕ пулма СССР Совнаркомĕн Председателĕн Заместительне **А. Н. Косыгин** юлташа уйăрса лартнă. **И. С. Хохлов** юлташа; вăл çар ĕçне ĕçлеме куçнă пирки, РСФСР Совнаркомĕн Председателĕн обязанноçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбинатне районсенче пахча-çимĕçсемпе çырласем илсе хатĕрлеме уполномоченнăйсемпе агентсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Коммунальнăй слобода, 21-мĕш номерлĕ çурт. Тел 1—73, пĕр звонок. 5—1

1943 çулхи майăн 9-мĕшĕнче Шупашкарта Кузнечнăй урамри 18-мĕш номерлĕ çуртăн картишĕнчен ăйăр çухалчĕ. Тĕсĕ—хура, ячĕ—„Мох".

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чăваш АССР, Советски район, Б. Токшиково ялĕ, „Динамо" колхоз правленийĕ.

Центрти Главзаготскотăн Чăваш республикинчи конторине ялан ĕçлеме çак специальноçсемпе ĕçлекенсем кирлĕ: старши экономист, старши ревизор, ревизор, база хуçалăхĕн начальникĕ, государство закупкисен старши инспекторĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Канаш урамĕ, 21-мĕш номерлĕ çурт, Центрти Главзаготскот. Тел. 6—12, 3—16. 2—1

Каучукран тунă çавракка пичет çухалнă. Пичет çине çапла çырнă: «Совнарком Чув. АССР. Отдел по хозяйственному устройству эвакуированного населения». Çухалнă пирки вăл пичете законсăр тесе шутламалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. б. 53 84 п. л.